**Депутат сăмах илет**

# Ял хуçалăхне ытларах тимлĕх кирлĕ

Акă ĕнтĕ 21-мĕш ĕмĕре кĕнĕренпе саккăрмĕш çул пурăнатпăр. Вăхăт шăвать, çулсем иртеççĕ. Иртнĕ ĕмĕрти 60-80-мĕш çулсенче ял хуçалăхĕнче еплерех ĕçленине аса илетĕп те ирĕксĕрех tарăн шухăша путатăп.

Мĕн амакĕ килсе таптарĕха пире? Паянхи ял пурнăçне пире çӳлтен ӳкерсе кăтартнă ял ĕçченĕн пуласлăхĕпе çыхăнтарма май пур-ши? Эпĕ районта чылай хушă ĕçлерĕм. Иртнĕ пурнăçри ял хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем йăлтах çав вăхăтра пулса пычĕç те ĕнтĕ. Пĕр 20 çул хушшинче кăна мĕнле улшăнусем пулса иртмерĕç пуль ун чух. Çулран çул çĕнĕ фермăсем, ача сачĕсем, шкулсемпе клубсем, асфальт сарнă çулсем, мехпарксем, çĕр улми тата тырă сортламалли, типĕтмелли комплекссем, тĕрлĕрен складсемпе хранилищĕсем туса тултарчĕç. Тырпул тухăçĕ, выльăх-чĕрлĕхрен туса илекен тупăш та çулран çул ӳссе пычĕ. Район çĕр улми туса илессипе те республикăра пĕрремĕш вырăнсенче пырса, çулсерен 30-35-шер пин тоннăна яхăн сутса тупăш илсе пычĕ ун чух. Кунсăр пуçне выльăх-чĕрлĕх валли мĕн чухлĕ çĕр улми хранилищĕсемпе буртсене хывнă. Кĕркунне кĕрхи çĕртме, хĕллехи вăхăтра уйсенче юр ытларах тытса хăварасси пĕрремĕш вырăнта тăнă.

Ун чухнехи лайăх енсене, районти ял хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсене, паллах, япăхпа никам та паян асăнас çук, асăнма сăлтавĕ те çук. Пирĕн ял хуçалăх системине ют çĕршыври фермерсем те ырланă, ăмсаннă. Çакна паянхи кун Белорусь Республики те çирĕплетсе парать. Вĕсем çак системăна аркатман, панкрута кăларса пĕр ял хуçалăх предприятине те пĕтермен.

Эпĕ районăн тĕп агрономĕнче ĕçленĕ вăхăтра район пуçлăхĕсем манран кашни çумланса кайнă пĕчĕк лаптăкшăн та çирĕп ыйтатчĕç. Уйрăмах ун чухнехи КПСС райкомăн пĕрремĕш секретарĕ В.С. Краснов хăй хуçалăхсем тăрăх нумай çӳретчĕ. Вара ăçта та пулсан пĕр 5 гектар выльăх кăшманĕ е 10 гектар кукуруза çум айĕнче пулнине курсан, питĕ çирĕп ыйтатчĕ.

Халĕ вара район тăрăх çӳренĕ май пуçа лайăх мар шухăшсем пырса кĕреççĕ. Нивушлĕ çынсем, йĕркеллĕ ĕçчен ял çыннисем, çак кĕске вăхăтра ухмаха ерме пултарчĕç? Паянхи кун ял хуçалăх предприятийĕсем пĕтни никама та хумхантармасть тесен те пысăк йăнăшах пулмĕ тесе шутлатăп. Çапла шутлама сăлтавĕсем те нумай вĕт-ха! Пĕчĕк лаптăксем кăна мар, 100-шер гектарлă уйсем çум курăксемпе хупланса выртаççĕ, выльăх-чĕрлĕх валли тунă кермен пек фермăсем юхăнса лараççĕ, çĕр улми хумалли хранилищăсем, тырă сортласа типĕтмелли комплекссем юхăнса саланаççĕ...

Мичурин ячĕпе хисепленекен, «Нива», «Новая Юнга», «Хлебороб», «Гигант», «Передовик» тата ытти чылай хуçалăхсене паянхи кун паллама та май çук. Хăй вăхăтĕнче, çывăрма манса, мĕн чухлĕ опытлă хуçалăх ертӳçисемпе агрономсем вăй хунă район хуçалăхне çирĕп шая хăпартас тесе. Вĕсен шутĕнче: Евтихий Андреевич Андреев, Алексей Петрович Петров, Васлий Павлович Павлов, Юлий Павлович Ильин, Юрий Андреевич Петров, Василий Егорович Соловьев, Сергей Афанасьевич Афанасьев, Аркадий Антипович Калинин, Анна Павловна Филиппова, Александра Федоровна Анисимова, Василий Александрович Белов, Раиса Васильевна Федосеева, Александр Васильевич Васильев, Иван Тихонович Тихонов, Алексей Николаевич Кожевников, Енафа Алексеевна Ильина, Герман Петрович Петров тата нумайнумай чунне парса ĕçленĕ чăн-чăн этемсем! Нивушлĕ паянхи аркату патне илсе пырассишĕн ырми-канми ĕçленĕ вĕсем?

Аса илетĕн те, ирĕксĕрех çак пурнăçшăн хама айăплă пек шутласа чунра лайăх мар пулса килет. Мĕнле-ха çакна халăх чăтать? Нивушлĕ ял çыннисен чунĕсем çав териех хытса ларчĕç? Е эрех ăшне путрăмăр-ши тесе шутлатăн. Пăхса тăрсах пĕтетпĕр вĕт-ха.

Хăшĕсем, паллах, патшалăха фермерсем тăрантарма пултараççĕ тесе шутлаççĕ пулĕ. Нумаях пулмасть манăн пĕр фермерпа калаçма тӳр килчĕ. Эпĕ унран выльăх-чĕрлĕх усрасси, органикăллă тата минераллă удобренисемпе усă курасси пирки ыйтсан, вăл мана азотлă удобренисемпе кăна усă курни çинчен каларĕ. Картограммăсем тăрăх тутлăхлă элементсене шута илсе хывмалли те уншăн сĕм вăрман пекех пулчĕ. Органикăллă удобренисĕр тăпрари пулăхлăх нумая пырас çукки тата кайран минераллă удобренисем те усă пама пăрахасси пирки каласан: «Колхозра пушă уйсем нумай, тепĕр çĕре куçса ĕçлĕп», – терĕ. Эпĕ вара тĕлĕннипе ним калама аптăрарăм. Нивушлĕ çакăн пек «çĕнĕлĕх» паянхи пурнăçăн малашлăхĕ пулса тăрать?

Район йĕркеллĕ аталаннă вăхăтра хуçалăхсем сухалакан çĕрсен кашни гектарĕ пуçне вăтамран 6-7 тоннăна яхăн органикăллă удобернисем хыватчĕç. Уйрăм уйсене илес пулсан гектар пуçне 60-80-шар тоннăна çитетчĕ. Кунсăр пуçне извеçлессине тата фосфоритлассине пысăк лаптăксем çинче туса ирттереттĕмĕр. Çĕнĕрен çĕнĕ йышши минераллă удобренисемпе усă кураттăмăр, складсем тăваттăмăр. Халĕ вара вĕсем ишĕлкелесе пĕтрĕç ĕнтĕ.

«Йăлтах кадрсенчен килет» – тетчĕç ун чухне. Çавна май район пуçлăхĕсем хуçалăх ертӳçисене, специалисчĕсене, вăтам звено специалисчĕсем таранах хатĕрлесе тăнă. Халĕ вара пирĕн механизаторсем те чылай çителĕксĕр, ун чухнехипе танлаштарсан, ял хуçалăхĕнче ĕçлекен техники те асăнмалăх кăна. Малтан вара икшер сменăпа ĕçлеме механизаторсем пулнă, çавна май кĕске вăхăтра çĕр хатĕрлесе акса хума, çавăн пекех тыр-пула хăвăрт пухма май пулнă. Паянхи кун ял хуçалăхĕ çут çанталăк условийĕсем лайăххипе кăна сĕтĕрĕнкелесе пырать тесе шутласан та тĕрĕс пулĕ. 1976 çулхи пек çанталăк çумăрлă пулас пулсан пур-çук тыр-пул та уйрах юлĕ. Пире паян Турри хĕрхенет пулĕ: уйăхĕпе акатпăр, икшер уйăх таран пуçтаратпăр.

Дояркăсем, выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем пирки те хальхи пек чăрмавсем пулман. Мана хăшĕсем ял пурнăçĕ лайăхланса пырать, малашлăх çутă та таса тени тĕлĕнтерет. Манăн вара çапла каланине пĕрре те ĕненес килмест, мĕншĕн тесен ялсенче йĕркеллĕ çамрăксен шучĕ те хушăнсах каймасть, ытларахăшĕ – ватăсем. Чылай çемьесенче газпа, электричествăпа усă курнăшăн та çемьери пенси илекен ватăсен укçисемпе кăна саплаштараççĕ. Çамрăксен ытларах пайĕ вара Мускавра е урăх çĕрте ĕçлет, хамăра тăрантарса ӳстернĕ çĕр пирки манса кайни те пире лайăх пурнăç шайне илсе çитерес çук. Аякри ĕç вăл ĕмĕрлĕх мар, çĕртен сивĕнни хăрушă. Хырăм тутă чухне вăл часах выçма пултарнине асра тытма каланă. Çакна пирĕн манас марччĕ. Эпир, çак çĕр çинче ӳснĕскерсем, çав фермер пек урăх çĕр çине нихăçан та куçса каяс çук пулĕ тесе шутлатăп.

Хамăн шухăшсене каланă май эпĕ район хаçачĕ урлă паянхи çĕр ĕçченĕсен пурнăçĕ пирки ятарлă рубрикăпа калаçусем ытларах ирттерме сĕнетĕп. Сирĕн шухăшсем еплерех? Тата манăн шухăшсемпе килĕшмен вулакансене хăйсен шухăшĕсене хаçат урлă сӳтсе явма ыйтатăп. Мана критиклесен эпĕ кӳренмĕп. Паянхи йĕркесĕрлĕх сирĕн чунсене вăраттăрччĕ çеç, хаклă вулакансем!

**П. ВОРОБЬЕВ,**
**депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.**

**01 пĕтĕмлетет, асăрхаттарать**

# *Вăхăтра пĕлтерни пĕлтерĕшлĕ*

***Иртнĕ кунсенче района Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн А. Маховăн çырăвĕ килнĕ. Унта шалти ĕçсен службин полковникĕ вырăнсенче пушартан сыхланассипе тимлĕрех ĕçлеме кирли пирки, çынсене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине мала тăратасси çинчен тата инкек сиксе тухсан кĕсье телефонĕпе пушар хуралĕпе епле хăвăрт çыхăнмаллине каланă. Çырупа паллаштарма патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхне Илья Николаевич СМИРНОВА чĕнтĕмĕр.***

– Лăпкă вырăнта пурăнатпăр пулин те, пирĕнтен кашнинех вăл е ку асăрханусăрлăхпа тимлĕхе çухатнине пула тата çынсем хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманнине, вĕсене сĕмсĕррĕн пăснине кура «хĕрлĕ автан» хăратса-шиклентерсе тăрать. «Пушар хыççăн шыв кирлĕ мар», – теççĕ халăхра шахвăртса. Çакăнпа инкек ума тăрсан кашниех килĕшетпĕр, анчах унччен...

Ирнĕ çул пирĕн район территорийĕнче 54 пушар пулчĕ. Вĕсенче миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 9 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ, виççĕн пиççе кайрĕç. «Хĕрлĕ автан» тыткăнĕнче 41 çурт-йĕр, 3 единица техника, 40 тонна выльăх апачĕ кĕлленчĕ. Çак инексем çынсене тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тутарайманнине кăçалхи пушарсем те калаççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа районта 4 пушар пулчĕ (пĕлтĕр çак вăхăтра – пĕрре). Электричествăпа хутса ăшăтмалли приборпа усă курмалли правилăна пăснипе январĕн 1-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнмалли çурт çунса кайрĕ, инкекре кил хуçи вилчĕ. Январĕн 11-мĕшĕнче кивĕ электропроводкăри кĕске замыкание пула Кашмашри пĕр хуçалăхра пурăнмалли çурт кĕлленчĕ. Çак сăлтавпах январĕн 15-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ишмула ялĕнче пурăнмалли çурт çунса кайрĕ. Мартăн 3-мĕшĕнче Шомик ялĕнче пулса иртнĕ хăрушă трагеди те асăрханулăха ялан малти вырăнта тытмалли пирки калать. Иккĕнех пурăннă пиччĕшĕпе шăллĕ пурăнмалли пӳрте газпа хутса ăшăтмалла туман, анчах хăйсем ниçта та ĕçлеменнине пăхмасăрах эрехрен айккипе пăрănса та иртмен, çăвартан пирус кăларман. Çак кун та çаплах пулнă. Пирус туртнă чух асăрханусăр пулнăран çур çĕр иртни пĕр сехетре хуçалăхра пушар тухать, вутра 54 çулхи В. Кирилловăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе вырăнсенче лару-тăрăва лайăхлатасси – пĕрлехи ĕç. Çакăнта ял старостисемпе вырăнсенчи депутатсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пĕрле пулса пире явăçтарса ăнлантару ĕçĕсем туса ирттермелле. Пушара сӳнтериччен ăна асăрхаттарма çăмăлрах. Пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнни тата инкек пирки пушар хуралне вăхăтра пĕлтерме пултарни çухатусене пĕчĕклетет кăна. Çакна валли стационарлă телефонсенчен район территорийĕнче «01» е «2-17-34» номерсемпе шăнкăравламалла. Кĕсье телефонĕсемпе усă курнă чух халĕ çĕнĕ çăмăллăх пурнăça кĕрет. Малашне кирек хăш мобиллĕ çыхăну операторĕ урлă та пушар хуралне «01 çăлтăр, шăнкăрав» кодпа тухма пулать. Кĕсье телефонĕсемпе усă куракансен çак номер яланах телефон кĕнекинче пулсан лайăх кăна.

**Благодарность**

# Спасибо за помощь в трудный час

Пожар... Страшно звучит это короткое слово. А если он на самом деле происходит...

В начале года с нами случилась беда. Наживать добро нам было особенно трудно. Муж инвалид 2-ой группы, не может работать. Мне казалось, что жизнь закончилась. Первые капли жизни в меня вселили родня и соседи, которые пришли на помощь. Ведь мне казалось, что мы одиноки в своем горе. И слава богу, что я ошиблась.

В эту деревню мы переехали в 2000 году. Время было тяжелое. К нашему счастью, жители деревни Кашмаши оказались добрыми. Они и в последний момент оказались рядом. Среди них много нам знакомых и незнакомых. Большое спасибо жителям д. Кашмаши, д. Сюрлатри, с. Моргауши, за помощь и поддержку. Особую благодарность хочется сказать своим родственникам, соседям, коллективу Кашмашской ООШ, Г. Ершовой, Е. Тихоновой, В. Щукиной, А. Щукиной, Г. И. Степановой, З. В. Васильевой, Н. Архипову, Ираиде и Анатолию Беловым, Р. Фадеевой и т. д. Большое спасибо Л. М. Ярикову, который в трудную для нас минуту представил временное жилье в своем старом доме.

Мы были приятно удивлены, когда глава Моргаушского сельского поселения Н.И. Никитин лично приехал и материально поддержал. С помощью добрых людей, несмотря на крещенские морозы, нам удалось построить новый дом. Добрый жест, всех помогавших нам людей, вселило пламя жизни. Сегодня просто хочется написать слова благодарности всем тем людям, которые несмотря на непогоду строили нам дом. Я отдаю Вам тепло своей души. Это: А. Иванов, А. Любимов, Г. Кириллов, В. Чиновников, А. Чиновников, В. Артемьев, Л. Артемьев, С. Петровский, А. Анисимов, Ю. Суриков, Ю. Широков, М. Трофимов, Л. Поликарпов, Ю. Трофимов.

Спасибо главе района Ю.А. Иванову, руководителю отдела соцзащиты населения райадминистрации Н.П. Петровой, главе Сятракасинского сельского поселения Ю.А. Кожевникову.

Вы вернули нас к жизни. Пусть даст Вам бог здоровья и пусть ваши добрые дела не останутся не замеченными.

**Семья УШКОВЫХ.**

**Çуркунне**

# *Иртерех вĕçсе килчĕç*

Иртнĕ хĕл тапхăрĕ сивĕ пулмарĕ. Çуркунне çитиччене пирĕн тăрăха кăнтăртан çунатлă туссем вĕçсе килме пуçларĕç. Акă февралĕн 27-28-мĕшĕсенче кураксем нумаййăн курăнма тытăнчĕç.

Çапла, вăхăт нумаях та иртмерĕ, мартăн 16-мĕшĕнче шăнкăрчсем вĕçсе килчĕç. Улма-çырла пахчисенче ӳсекен йывăçсем çине туса çакнă шăнкăрч вĕллисем умĕнче, çуркунне çитнине систерсе, хăйсен çепĕç сассипе тавралăха илем кӳме пуçларĕç.

Вĕсем хыççăн акă ытти кайăксем те пирĕн енне вĕçсе килĕç.

Çунатлă туссене кĕтсе илсе, вĕсене валли вĕллесем туса парасси пирки те манмалла мар. Çак ĕçе вара аслăрах классенче вĕренекен ачасене ытларах хутшăнтармалла, шкулсенче кайăксен кунне халалласа вечерсемпе конкурссем ирттермелле.

Кăçалхи пек вĕçен кайăксем кăнтăртан иртерех вĕçсе килни малтанхи çулсенче пулманччĕ.

**Александр ШАРИКОВ, орнитолог.**

**Районти пултаруллă ĕçченсем**

# Алли ăста пулнăран

Шашкар тăрăхĕнче пултаруллă çынсем сахал мар. Манăн вара Леонид Васильевич Ермаков пирки каласа парас килет. 1928 çулхи мартăн 14-мĕшĕнче Мăн Шашкар ялĕнче çуралнă вăл, кунтах ӳссе çитĕннĕ. Çамрăклăхĕ вăрçă тата вăрçă хыççăнхи йывăр вăхăта килнĕ.

16 çула кайнă çамрăка Шупашкар хулинчи ФЗО шкулне илсе кайнă. Хыççăн вăл 320-мĕш çар заводĕнче слесарь-юсавçă пулса тăршнă. Унтан вăл Харьков хулинчи электромеханика заводĕнче ĕçленĕ. 1947–1948 çулсенче Куславккара авиазаводра ĕçленĕ, вăрман каснă.

Тăван яла таврăннă хыççăн колхозра строительство ĕçĕсене йĕркелесе янă, 1967–1968 çулсенче ĕне ферми, унтан Вăрманкасси шкулне, 1971–1972 çулсенче сысна ферми тунă çĕрте вăй хунă. Кайран 18 çул хушши Вăрманкасси шкулĕнче кочегарта ĕçленĕ, кайран 4 çул кочегарта «Ромашка» санаторире тимленĕ, унтанах тивĕçлĕ канăва тухнă.

Леонид Васильевич нихăçан та алă усса ларма хăнăхман. Çавăнпа та пенсире пулсан та ĕççĕр лармасть вăл. Кĕрсе пăхăр-ха унăн пахчине. Мĕн тĕрлĕ улма-çырла ӳсмест пулĕ унта.

Хĕл кунĕсене те усăсăр ирттермест ватă çын. Карçынккасем çыхать, çунашкасем, картламсем ăсталать. Вĕсем вара ял çыннисене куллен тенĕ пекех кирлĕ.

Леонид Васильевич тăван ял историйĕпе те кăсăкланать. Вăл пулăшнипе Мăн Шашкар ял клубĕнчи Шашкар ялĕ çинчен хывнă альбом татах та пуянрах курăнать.

Пирĕн çавăн пек пултаруллă çынсем пуррипе чăннипех те савăнас килет. Пире вăл хăйĕн тĕслĕхĕпе пурăнма тата ĕçлеме вĕрентсе пырать. Юбилей ячĕпе ăна чĕререн саламланă май малашне те çирĕп сывлăх, ăнăçусем суннă пулăттăмăр.

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Мăн Шашкар ял клубĕн ертӳçи.**

**Пирĕн пата çыраççĕ**

# *Старта ашшĕсем тухрĕç*

«Малыш» ача садĕнче вăй хуракансем пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Çавăнпа та аякра вырнаçнă ялсенчен те ачасем Отаркăри садике çӳреме кăмăлласçĕ. Тĕрлĕ утренниксемпе концертсене, ĕçлĕ тĕл пулусемпе пухусене ашшĕ-амăшĕсем савăнсах килеççĕ. Хăйсен ачи аталанса пынипе, вăл садикре вăхăта епле ирттернипе кăсăкланаççĕ.

М.В. Иванова садик ертӳçин пухусенче ашшĕ-амăшĕсемпе калаçмалли нумай. Вăл яланах мĕн туса ирттернине тата пĕрле хăш ĕçсене пурнăçламалли пирки сăмах хускатать. Тĕрлĕ конкурссене хутшăнма сĕнет ашшĕ-амăшĕсене, активлă пулма чĕнсе калать.

Нумаях пулмасть ашшĕсене йĕлтĕр йĕрĕ çине тăма «пулăшрĕç» садикре. Ача чухнехи пек хĕл кунĕсенче йĕлтĕр сырмастпăр вĕт урасене. «Малыш» алăкĕнчен арçынсем старта тухрĕç. Виçĕ ушкăнри ачасен ашшĕсем йĕлтĕр йĕрĕ çинче вăй виçрĕç. Тупăшнинчен ытла вара хаваслăх, килĕшӳ илчĕç вĕсем стартран. Л.Яковлев, Н. Афанасьев, В. Борисов çĕнтерӳçĕсем пулчĕç. Арçынсем те ачасем пекех савăнчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# *Ăшă кăмăллă уяв*

Москакассинчи Культура çуртĕнче тĕрлĕрен уявсене пĕрле пухăнса уявласси тахçанах йăлана кĕнĕ. Мартăн 6-мĕшĕнче те кунта Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне халалласа уяв каçĕ иртрĕ.

Пухăннисене савăнтарма Çурлатринчи эстрада ушкăнĕ килсе çитрĕ. Концерт пуçланиччен вара Культура çурчĕн директорĕ Г. Голубева хĕрарăмсене çывхарса килекен уявпа саламларĕ, РФ Президенчĕн суйлавĕн итогĕсемпе паллаштарчĕ. Ташă-юрă сахал мар пулчĕ ку каç. Кăçал Çемье çулĕ пулнă май сцена çинче шăпах çемье ушкăнĕсем пулчĕç. Кусем вĕсем Крючковсен, Филипповсен, Пушкинсен, Николаевсен çемйисем. Çамрăк юрăç Алена Филиппова хăйĕн çепĕç сассипе пурне те тыткăнларĕ. Наташа Крючкова вара ăста ташлама пултарать иккен. Максим Аксендаровпа Юрий Филиппов çамрăксем те ташăна ăста.

Чăн-чăн уяв каçĕ парнелерĕç Çурлатрисем пире.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакасси ял тăрăхĕнчи хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи.**

# *Вĕсен ĕçĕсем ăнса пыччăр*

Нумаях пулмасть Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунне паллă турăмăр. Вĕсем вара хальхи вăхăтра арçынсемпе танах пур отрасльте те тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмах вара манăн право сыхлавĕн органĕсенче тăрăшакан хĕрарăмсене хăйсен йывăр та пархатарлă ĕçĕсемшĕн тав сăмахĕ каласа иртсе кайнă уявпа саламлас килет. Акă кунта чи малтанах район сучĕн председательне Э.Л. Тарасована, районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан Л.А. Ядыкована, Е.А. Федорована тата ыттисене асăннă пулăттăм. Ĕçĕрсем ăнса пыччăр, утас çулăрсем такăр та çутă пулччăр.

**Ф. СОФРОНОВА.**

Автанкасси ялĕ.